# АСАМЛĂ КĔВВĔН ЫЛТĂН УÇÇИ

ПУРАННА ЧУХ темшĕн май пур çĕртех савăнма пĕлместпĕр, хамăр телейлĕ пулнине ăнланса илсе чуна пуянлатма хевте çитерейместпĕр. Хама хăлхасăр пулманнишĕнех телейлĕ тени, тен, кулленхи арпашулла пурнăç виçипе хакласан, кулăшла та ăнланмалла мартарах пулĕ, анчах та темле пулсан та чуна çунатлантарса ăна тÿпене çĕклекен кĕвве туйса илме пултарни чăн-чăн телей. Кама Чайковский, кама Бизе, кама «Битлз», кама «Кино», кама чăваш халăх юрри-кĕвви çак çĕр çинче те Чун пурăннине ăнланса илме пулăшать, кама Асламас юрри-кĕвви хăй патне туртать... Çын мисе çулта пулни, ăçта ĕçлени е вĕренни, мĕнле пурăнни пĕлтерĕшсĕр, унăн чунлă çес пулмалла, вара асамлă кĕвĕн ылтăн уççи унăн аллинче пулĕ.

Анисим Асламас композитор çуралнăранпа 70 çул çитрĕ. Виçĕм кун Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче чаплă лару-тăрура юбиляра чысларĕç, унăн произведенийĕсенчен йĕркеленĕ концерт кăтартрĕç. Уява пухăнакансен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлес килчĕ. Малтан ватăраххисен сăмахне тăнлас терĕм. Çума çумăн ларакан çамрăках мар арçынпа хĕрарăм нумай çул хушши пĕрле пурăннă телейлĕ мăшăр пек туйăнчĕç те вĕсем патне пытăм — Анисим Васильевичăн чи çывăх тăванĕсем иккен: композиторăн ялтан килнĕ шăллĕпе йăмăкĕ.

Михаил Васильевич Васильев, Етĕрне районĕнчи Асламас шкулĕнчи физикăпа математика учителĕ: Çак уява эпир, те тăванĕсем пулнăран, те хамăр та ватăлнăран, çав тери пысăк кăмăлпа, çав тери пысăк интереспа килтĕмĕр. Анисим пичче фронта кайнă вăхăтра эпĕ 12 çулта пулнă, вăл музыка училищинче вĕренекенскер, манран 10 çул аслăрахскер, ун чухнех музыка произведенийĕсем çыратчĕ. Унăн кĕввисенче хăйĕн кун-çулĕ: ăна çара мĕнле ăсатни, фронт çулĕпе утса тухни... Анисимăн тата манăн икĕ пиччеччĕ, фронтовиксем, паянхи куна вĕсем иккĕшĕ те çук, Аслă пичче фронтран таврăнаймарĕ, вăрçă хирĕнче вилчĕ, тепри вăрçăран таврăнчĕ пулин те, контузи хыççăн чирлĕскер 29 çултах çĕре кĕчĕ. Пирĕн çемьере çичĕ ача пулнă, эпир пурте музыкăна юратнă.

(Вĕçĕ 4-мĕш страницăра).



# АСАМЛĂ КĔВВĔН ЫЛТĂН УÇÇИ





(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Зоя Васильевна Малова: Эпĕ [illegible]училище пĕтернĕ. Хуткупаспа, сĕрмекупăспа калама пĕлни мана пуçламăш класри ачасемпе ĕçленĕ çĕрте питĕ пулăшать. Эпир Анисимшăн питĕ савăнатпăр, çавăнпа та ĕнтĕ паян чупса килтĕмĕр. Атте-анне те юрлама юратнă, хăй вăхăтĕнче пирĕн хамăрăн çемье хорĕ те пулнă. Мана Анисимăн «Надя юрри» питĕ килĕшет, ачасем валли çырнисем те, вальсĕсем те кăмăла каяççĕ, ачасемпе ĕçлеме пулăшаççĕ.

Юхма Мишши: Кашни пултарулăх ĕçченĕн юбилейĕ вăл наци уявĕ. Нумаях пулмасть Çурçĕр Кавказра пултăм, вĕсем хăйсен поэчĕсене мĕнле чысланине курса тĕлĕнтĕм: Мĕн кăна парнелемеççĕ, машина таранах. Пирĕн вĕсенчен вĕренмелле. Асламаса чыслатпăр-и, теприне-и, пурин те савăнмалла. Юратапăр-и, юратмастпăр-и, темле пулсан та вĕсем пирĕн халăхшăн тĕлĕнмелле паттăр ĕç тунă çынсем, çавăнпа та вĕсен ĕçне тивĕçлĕ хак памалла.

Анисим Асламас хывнă юрăсемпе музыка произведенийĕсенчен йĕркеленĕ концерта курма çамрăкки те, ватти те йышлă пуханни хăех тивĕçлĕ хак памасть-и-ха композитор пултарулăхне? Кашни опера сыпăкĕ-çе юрă хыççăн тăвăллăн алă çупни тата?

Уява ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ В. П. Иванов уçрĕ, композитора 70 çул тултарнă ятпа саламланă май министерство ячĕпе чечек çыххи тата «хаклă» конверт парнелерĕ. С. И. Макарова музыковед пуханнисене юбиляр ĕçĕ-хĕлĕпе тата пурнăçĕпе паллаштарчĕ. Анисим Васильевича малашне те тухăçлă ĕçлеме çирĕп сывлăхпа хавхалану сунчĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ С. И. Маринова паллă композитора Патшалăх Канашĕ ячĕпе саламланă май 12 çынна хăналамалли илемлĕ чей сервизĕ парнелерĕ, Асламас юррисене итленĕ е юрланă чух: «Ырă шухăш çуралать, пурăнас килет, юрлас килет, малалла пысăк утăмсемпе каяс килет», — тесе пĕлтерчĕ, çакна çирĕплетсе хăй те пĕр çаврăм юрă юрласа пачĕ.

Анисим Васильевича чысласа ырă сăмах калакансен, парне паракансен вĕçĕ-хĕрри те пулас çук тесе шутланă самантсем те пулчĕç. Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ те, Чăваш патшалăх филармонийĕн, музыка училищин директорĕсем те — кам кăна чунчĕререн саламламарĕ пуль паллă композитора. Тăван ялĕсем те килнĕ Анисим Асламаса чыслама: килте пĕçернĕ çăкăрпа, тăван уй-хир чечекĕсен сĕткенĕнчен пухнă сиплĕ пылпа...

Композитор хăй çак уяв концертĕнче унăн ĕçĕн пĕр пĕчĕкпĕчĕк пайĕ çеç курăнĕ тесе каларĕ пулин те, концерт пуянта тĕрлĕ енлĕ пулнинчен, куракана кăмăла кайнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Темле пулсан та, 55 çул 55 çулах, 5 çул мар, çак хушăра халăха кăмăла каякан кĕвĕсем сахал мар хывнă Анисим Асламас. Чăваш рапсодийĕ янрарĕ-и, Валентина Смирнова «Евчĕ» оперăри Надьăн лирикăлла юррине юрларĕ-и, «Иван Яковлев» оперăри Пахом мучи юрри е Чăваш Гимнĕ шăранчĕ-и, «Нарспи» балет-оперăри çăлкуç патĕнчи сыпăка кăтартрĕç-и—куракан пурне те ăшшăн йышăнчĕ, композитор вара хăйĕн савăнăçне, хавхаланăвне пытармасăрах сцена çине 70 çулхи ватă пек мар, 17 çулхи яш пек чупа-чупа тухрĕ, хăйĕн юррисемпе кĕввисене халăх патне çитерме пулăшнă артистсене алă пара-пара саламларĕ. Уяв концерчĕ Анисим Асламас Анатолий Смолин сăмахĕсемпе çырнă «Шупашкар вальсĕ» юрăпа вĕçленчĕ. Ăна пурте пĕрле юрларĕç: Чăваш патшалăх академи капелли те, юрăпа ташă ансамблĕн хорĕ те, Г. С. Лебедев ячĕллĕ лицей-интернатри ачасен хорĕ те. Мăн çынсемпе пĕрле ачасем те хавхаланса юрлани паянхи кунпа çак самант çеç мар, малашлăх та çутă та телейлĕ пулассине ĕнентерчĕ.

Концерт хыççăн чăваш халăх поэчĕ Васлей Давыдов-Анатри çапла каларĕ: «Анисим Асламас пирĕн халăхăмăрăн телейĕ. Вăл пурăнни, вăл ĕçлени, вăл тăван халăхăмăршăн çакăн пек тĕлĕнмелле вăйлă парнесем хăварни. пирĕншĕн телей, пĕтĕм халăх телейĕ. Паянхи концерт мĕн виличчен, мĕн чĕрем тапма пăрахиччен асăмран тухас çук».

Р. ГУРЬЯНОВА.
Г. ВЕРБЛЮДОВ
сăнÿкерчĕкĕсем.